Санăн çыннусем, Елчĕк енĕ

# В.Агеевăн юбилей

Ака уйăхĕн 2-мĕшĕнче Елчĕк енĕн мухтавлă та пултаруллă ывăлĕ – Чăваш Республикин халăх художникĕ, Чăваш Республикин патшалăх премийĕн лауреачĕ Владимир Иванович Агеев 75 çул тултарать. Юбилей ячĕпе хисеплĕ ентешĕмĕре саламласа ырлăх-сывлăх, вăрăм ĕмĕр сунса унăн пархатарлă кун-çулĕ куç умне тухса тăрать.

1932 çулта Аслă Елчĕк ялĕнче çуралнăскер, сăнарлăх ӳнерне пĕчĕкренех аслашшĕпе ашшĕнчен тата кукашшĕнчен хăнăхса çитĕнет, çавăнпах вăл вăтам шкул пĕтернĕ хыççăн Шупашкарти патшалăх ӳнер училищинче ăсталăха туптать. Дипломлă специалистшăн çул уçă, тĕрлĕ шкулта рисовани тата черчени предмечĕсене вĕрентме пуçлать. Пушă вăхăтра нумай ӳкерчĕксем тăвать.

Чăваш кĕнеке издательствин ӳнерçинче вăй хураканскер, ют çĕршыв, совет, вырăс, чăваш çыравçисен 200 ытла кĕнекисене илемлетет. Чăваш халăх историне, йăли-йĕркине сăнласа ӳкерессине тĕп вырăна хурса ĕçлет.

Паллă художникăн ĕçĕсемпе урăх çĕршывсенче те интересленеççĕ, унăн ӳкерчĕкĕсем чылай çĕршывра упранаççĕ.

2006 çулта ОАО «Шупашкарти электроаппаратура завочĕн» директорĕн М.А.Шурдовăн проекчĕ тăрăх В.И.Агеевăн ĕçне-хĕлне сăнлакан альбом пичетленсе тухрĕ. 60 х 90 форматпа илемлетнĕ кĕнеке «Владимир Агеев» ятлă.

Кĕнекере В.Агеевăн живопиçпе графикăн нумай ĕçне кăтартнă. Малтанхи страницăра Владимир Иванович каласа панине акă мĕнле пуçланă?

– Хама хам темиçе хутчен те ыйту панă эпĕ: «Мĕншĕн художник пулма шутларăм-ха?» – Çак тĕнчене килсен, ӳснĕçемĕн эпĕ çут çантаăк пулăмĕсенчен тĕлĕнеттĕм. Мĕн чухлĕ



ыйту çуралатчĕ. Ыйтусен хуравне сăнарлă искусство майĕпе тупма тăрăшаттăм. Чăн-чăн художник пулас тесен турă панă пултарулăх çеç сахал, ĕмĕрĕпех чунра тапса тăракан вăй-хăвата сӳнме памалла мар... Тĕлĕнмелле вырăнлă сăмахсем. Çын çĕр çинче ĕмĕрлĕх марçке. В.И.Агеев ентешĕмĕр хăйĕн тĕлĕнмелле ĕçĕсемпе ĕмĕрлĕхех ку тĕнчере юлĕ.

**В.ВАСТУЛОВА,**
**Елчĕкри историпе тăван тавралăх музейĕн заведующийĕ.**